* * *

Аслă уя тухрăм ула йытăпа,
Йытти вĕшле — кайăксене тытмашкăн,
Вăрман витĕр тухсан, вĕшле çухалчĕ—
Ахăр, кайăк хыççăн чупса кайрĕ пуль.

Ачаранпа ял хӳттинче ӳснĕччĕ,
Чĕрем паттăр — хура уйра тĕрмешме.
Хула енне ухсан, чĕре улшăнчĕ —
Ахăр, хула сĕткен юна çапрĕ пуль.

Хула сĕткен юна витĕр çапнăран
Манăн сăмах сана пӳлĕм пулмĕ-ши?
Эсĕ манăн сăвва тытса вуласан,
Санăн ялти кăмăл кӳтсе каймĕ-ши?

Виç кĕтеслĕ кĕсле тытса калăттăм,
Кӳттерме мар — майлă кĕвĕ шырăттăм.
Тӳр пилĕклĕ хĕрсем чĕнсе тухăттăм,
Сан кăмăлшăн вăй пуçласа ярăттăм.

Анчах сăвă хуса сăвă калама —
Ӳснĕ чухнех чура — хăçан вĕреннĕ?
Умма сиксе тухса вăйра ташлама
Ĕçпе ваннă шăмшак — ăçтан пултăр ку?

Тарпа-шурпа алăм-ура хытнăран
Хура уйшăн сăвă хума халăм çук —
Хура яла кĕрсен, чĕрем ыратать
Çамрăк яшă ĕмри унта путнăран.

Пĕчикренпе ӳснĕ пылчăк ăшĕнче
Çукпа нуша ялан пулнă юлташсем,
Пуянпала куштан йытти айĕнче
Усалпала ырă кунсем — тăвансем.

Çамрăк кунсем — ялта путса пурăнни
Тĕтĕм çăтсан кулса хăснă евĕрлĕ
Айван пуçпа хам вăйăма пĕтерни —
Мĕскĕн хала çĕмĕрет ун сĕрĕмĕ.

1920—1921